# Чăн-чăн полковник

Январьлă хушамачĕшĕн кăна мар, ытларах пархатарлă та курăмлă ĕçĕсем тăрăх ăна хамăр районта та, республикăра та лайăх пĕлеççĕ. Геннадий Бурмистров тесен, куç умне пултаруллă спортсмен, чаплă йĕркелӳçĕ тата милици полковникĕ тухса тăрать



**Хĕрĕх çула яхăн çывăх пĕлекен юлташăмпа унăн юбилейĕ умĕн тĕл пулса калаçма тӳр килчĕ. Ĕненес килмесен те килĕшме тивет – Геннадий Ефремович февралĕн 10-мĕшĕнче утмăл тултарать. Шăкăл-шăкăл калаçура вăл хăй ку таранччен утса тухнă кун-çулĕн сукмакĕпе тепĕр хут утăмларĕ тейĕн.**

**– Пире, вăрçă хыççăнхи çулсенче çуралнисене, Тăван çĕршыва юратма, çирĕп сывлăхлă, вăйлă пулса çитĕнме ачаран çине тăрса хăнăхтарнă, – тет Г.Бурмистров. – Эпĕ, çемьери виçĕ хĕрпе виçĕ ывăлтан чи кĕçĕнни пулнă май, аслисене кура-ши, утма тытăнсанах спортпа туслашнă.**

**ЮБИЛЕЙ**

Утмăлмĕш çулсенче Хапăсри шкулта физкультура учителĕ Эрик Кузьмич Кузнецов коньки спортне аталантарассипе нумай тимленĕ. Вăл пысăк шанăç паракан Гена Бурмистрова спортăн çак енĕн вăрттăнлăхĕсене çине тăрса вĕрентнĕ. Тĕрĕссипе, ял ачисем вăй-хал тата тӳсĕмлĕх тĕлĕшĕнчен яланах палăрса тăнă. «Пирĕн йытă хăваласа çӳреме вăхăт пулман, çулла колхозра вăй хунă, ĕненмелле мар пек, анчах ĕç хыççăн волейболла е футболла выляма та мехел çитернĕ, – аса илет Геннадий Ефремович. – Хĕлле конькипе ярăннă, йĕлтĕрпе чупнă».

Коньки тенĕрен, Геннадий хĕл кунĕсенче эрнере виçĕ хутчен Вăрнарти «Химик» стадиона çӳренĕ, кунта Гарий Анатольевич Алексеевпа Юрий Матвеевич Краснов тренерсем патĕнче ăсталăха туптанă. Вăрнар юханшывĕ пăрпа витĕнсен кунта конькипе чупакансен ăмăртăвĕсем хĕрӳ иртнĕ. 500, 1000 тата 1500 метрлă дистанцисенче Геннадий Бурмистров темиçе хутчен те район чемпионĕ, çиччĕмĕш класра чухне республика чемпионĕ пулса тăнă. Ăна çамрăксен пĕрлештернĕ командине илнĕ. «Урожай» ирĕклĕ спорт общество ялти спортсменсем хушшинче иртнĕ вуншар ăмăртăва хутшăнса Раççейри тĕрлĕ хуласенче пулнă Хапăс çамрăкĕ. Лайăх кăтартусемпе савăнтарнă.

Ачалăхри йывăр пурнăçа пĕрле пайланă тусĕсемпе – Вениамин Барановпа, Николай Есенцевпа, Вячеслав Степановпа, Александр Яковлевпа – Геннадий Ефремович халĕ те тачă çыхăну тытать.

– Утмăлмĕш çулсен пуçламăшĕнчи выçăллă-тутăллă пурнăçа аслăраххисем манман пуль, – калаçăва малалла тăсать Г.Бурмистров. – Çăкăр туянма Вăрнара çӳреттĕмĕр. Аслисем ĕçре пулнă пирки çак тивĕç пирĕн çине тиеннĕччĕ. Вунă пуса перекетлес тесе автобуспа кайман, ултă çухрăма утса-чупса тухаттăмăр. Пĕр çăкăршăн черетре виçĕ-тăватă сехет тĕмсĕлеттĕмĕр.

Савăнăçлă самантсем те асран тухмаççĕ. Вуннăмĕш класа çӳреме тытăнсан Тюменьти аккăшĕ Геннадие питĕ килĕшӳллĕ, йăмăх хура лавсан костюм ярса панă. Чаплă парнешĕн хĕпĕртенипе пĕлĕте вĕçсе хăпарманни кăна.

Вăтам шкул хыççăн института вĕренме кĕнĕ пулсан, тен, Геннадий Ефремовичăн пурнăçĕ урăхларах çулпа каятчĕ. Пĕр балл çитменни ура хунă. Шăпаран иртеймĕн теççĕ мар-и? Хапăс каччи районти çар комиссариачĕ урлă Канашра водителе вĕренсе тухать. Ăна Пĕтĕм Раççейри ирĕклĕ пушар обществин районти уйрăмне инструктора йышăнаççĕ. Водитель тивĕçне те хăех пурнăçланă. Çивĕч те вăр-варскер районти кашни яла, предприятипе организацие çитет, пушар хăрушсăрлăхĕ енĕпе лекцисем вулать.

Çулталăкран Г.Бурмистровăн çара кайма ят тухать. Приморье крайĕнчи Уссурийск хулине, автомобиль çарĕсене, лекет. Ăна, çара киличченхи ĕçне кура, гарнизонти пушар командине çирĕплетеççĕ. Спортпа туслăскер кунта та кĕçех палăрать. Хапăс йĕкĕчĕ пушар-прикладной спорт енĕпе çар округĕнчи ăмăртусене хутшăнса чи лайăх кăтартусем тăвать, СССР спорт мастерĕн нормативне тултарать. Команда Мускавра Пĕтĕм Раççейри ăмăртура та вăй виçме тивĕç пулнă.

Пултаруллă салтака Уссурийскри автомобиль-команда аслă çар училищине запасри офицерсем хатĕрлекен курссене вĕренме янă. Ăна чи лайăх паллăсемпе вĕçленĕ хыççăн Г.Бурмистров кĕçĕн лейтенант автомобиль взвочĕн командирĕ пулса тăнă. Çамрăк офицера парти членĕн кандидатне илнĕ. Анчах пурнăçне Совет Çарĕпе çыхăнтарма шăпа пӳрмен. «Тĕнче хĕрринче» хĕсметре тăракан кĕçĕн ачине тăван яла, тĕп киле таврăнма ыйтса ашшĕпе амăшĕ çыру хыççăн çыру ăсатнă.

1973 çулта, çуралнă çĕршыва саврăнса çитсен, Геннадий Бурмистрова, ят илнĕ спортсмена, парти райкомне чĕнтернĕ, яваплă ĕç сĕннĕ. Турткаланса тăман, тӳрех килĕшнĕ. Çапла, çирĕм пĕррери çамрăк райĕçтăвком çумĕнчи физкультурăпа спорт комитечĕн председателĕ пулса тăнă. Çичĕ çула яхăн шанчăклă туртнă çак йывăр лава. Шăпах Геннадий Ефремович комитета ертсе пынă çулсенче Вăрнар тăрăхĕнче физкультурăпа спорт ĕçне çӳллĕ шая çĕклеме пултарнă. Лайăх астăватăп: канмалли кунсенчен кашниййĕнче тенĕ пекех Вăрнарта спортăн тĕрлĕ енĕпе республика шайĕнчи ăмăртусем иртетчĕç. Вăрнарсем вара яланах малтисем пулнă. Çав çулсенче çăмăл атлетика, йĕлтĕр спорчĕ, ГТОн нумай енлĕ ăмăртăвĕсем, биатлон тата ытти те уйрăмах вăйлă аталаннă. Массăллă спорта тата сывлăхлантаракан ĕçе лайăх йĕркеленĕшĕн пирĕн район икĕ хутчен республика Министрсен Канашĕн тата облсовпрофăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне, комсомол Тĕп комитечĕн куçса çӳрекен Кубокне тивĕçнĕ. Геннадий Ефремович пуçарнипе Совет Союзĕн Геройне Анатолий Иванова халалласа Аслă Çĕнтерӳ кунĕнче Вăрнар – Хапăс – Вăрнар маршрутпа чупу ирттерме тытăннăччĕ.

– Районта спорт шкулĕсене иккĕ таран уçма май килтертĕмĕр, – тет Г.Бурмистров. – Ачасене спорта явăçтарассипе Владимир Егоров, Станислав Зубов, Геннадий Александров чуна парса ĕçленине халĕ те ăшшăн аса илетĕп. Спорт ветеранĕсем те – Николай Антонович Старшов, Александр Тимофеевич Песков, Валерий Миронович Миронов, Петр Павлович Павлов, çавăн пекех «Урожай» ирĕклĕ спорт обществăн районти ертӳçи Геннадий Иванович Репин нумай пулăшнă.

Вăтăр виçĕ çул каялла Г.Бурмистров пурнăçĕнче çĕнĕ тапхăр пуçланнă – партин Чăваш обкомĕн бюровĕн йышăнăвĕпе ăна Шалти ĕçсен министерствин органĕсене службăна янă. Геннадий Ефремовича шалти ĕçсен Вăрнар районĕнчи пайĕн пуçлăхĕн заместительне çирĕплетнĕ. «Виталий Артемьевич Степановпа ĕçлеме çăмăлччĕ, – аса илет Г.Бурмистров. – Вăл воспитани ĕçне мала хуратчĕ, коллективра спорт ĕçне аталантарса яма нумай пулăшрĕ. Пирĕн волейболистсем районта чи вăйлисен шутĕнче пулнă. Кӳршĕллĕ районсенчи милиционерсемпе, çавăн пекех республикăри Шалти ĕçсен министерствин тĕп аппарачĕн командипе час-часах вăй виçнĕ. Анатолий Максимов, Николай Ведин, Владимир Николаев, Петр Лисичкин, Василий Паньков, Станислав Порфирьев, Валерий Казаков ăста выляниле сахал мар çĕнтерӳ тунă».

1985 çулта Геннадий Ефремовича Шупашкара тата яваплăрах ĕçе куçарнă. Республикăри Шалти ĕçсен министерствин пĕр подразделенине икĕ çул ертсе пынă хыççăн тĕп аппарата куçарнă. Ăна чи йывăр уйрăма – участокри инспекторсен службине – шанса панă. Хăватлă çĕршыв саланса каяс умĕнхи ахăрсамана тапхăрне манман-ха. Ют пурлăха çаратнă, çынна çын вырăнне хума пăрахнă тĕслĕхсем вуншар хут ӳссе кайнă. Лăпкă мар лару-тăрура милицин участоксенчи инспекторĕсене уйрăмах йывăр килнĕ. Пăтрану тапхăрĕнче участоксенчи инспекторсен йышне ӳстерме, вĕсем валли ятарлă ĕç пӳлĕмĕсем уйăрма, çыхăну хатĕрĕсемпе, мотоциклсемпе тивĕçтерме май килнĕ. 1991 çулта участоксенчи инспекторсен службии шалти ĕçсен системинче уйрăм тытăм пулса тăнă. Г.Бурмистрова çак служба пуçлăхĕн заместительне çирĕплетнĕ. 1996 – 2004 çулсенче вăл ку уйрăм пуçлăхĕнче, Министр заместителĕн заместителĕнче тимленĕ. Республикăри тĕп участковăйăн нумай ыйтăва татса пама тивнĕ. Çула çитменнисем, потребитель рынокĕнчи йĕркесĕрлĕхпе кĕрешес, хыпарсăр çухалнисене шыраса тупас т. ыт. те тĕлĕшпе çыхăннă ĕçсем хушăнсах пынă.

Геннадий Ефремович Чечняра тăватă хутчен пулнă, çапăçу служба хушăвĕсене пурнăçланă. Патшалăх наградисене тивĕçнĕ. Унăн кăкăрне «Шалти ĕçсен министерствин службинчи хастарлăхшăн», çавăн пекех «Шалти ĕçсен министерствин службинчи тӳрĕ кăмăллă ĕç-хĕлшĕн», «Обществăри йĕркелĕхе сыхлас ĕçре палăрнăшăн» медальсем тата Жуков медалĕ илемлетеççĕ. «Чи хаклă награда – «Раççей Федерацийĕн Шалти ĕçсен министерствин Хисеплĕ сотрудникĕ», – пĕлтерет Г.Бурмистров. Милици полковникне «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ юрисчĕ» хисеплĕ ят панă.

Халĕ Геннадий Ефремович республика тĕп хулинче «Интех» компани директорĕнче вăй хурать. Пушă вăхăтра юлташĕсемпе сунара тата пулă тытма çӳреме юратать. Икĕ хĕрĕпе ывăлĕ ашшĕпе амăшне пилĕк мăнук парнеленĕ.

Хамăрăн пултаруллă та çаврăнăçуллă ентеше, чăн-чăн полковника, хисеплĕ Геннадий Ефремович Бурмистрова юбилей ячĕпе ăшшăн саламласа çирĕп сывлăх, телей, ăнăçу сунатпăр.

**В.НИКОЛАЕВ.**

# Ӳркенмесен ĕç пулать

(Вĕçĕ. Пуçл. 1 стр.).

пулас механизаторсем, хатĕр пулнипе çирĕплетрĕç. Каласа хăвармалла, ял хуçалăх таварне туна илекенсене çур аки ирттерме дизтопливăн хакне 30 процент таран чакарса парĕç.

*– Ĕç укçине тивĕçлĕ тӳлени пĕлтерĕшлĕ.*

– Ĕçлеме условисем туса панипе пĕрлех шалу тивĕçлĕ тӳлесси, тӳрĕ кăмăллă тăрăшакансене моральпе пурлăх тĕлĕшĕнчен хавхалантарасси пирки асра тытмалла. Иртнĕ çулхи кăтартусене илсессĕн çакă яр уççăн курăнать: «Санары» агрофирма ĕçченĕсене чи пысăк шалу – вăтамран 12366 тенкĕ – тӳленĕ. Вăрнарти аш-какай комбиначĕн хушма хуçалăхĕнче вăй хуракансем вăтамран 12158 тенкĕ, Карл Маркс ячĕллĕ кооперативра тимлекенсем 11148 тенкĕ илнĕ. Анчах та ĕç укçи «Родина», «Родник», «Юнтапа», «Гвардеец» хуçалăхсенче 4330–5240 тенкĕпе кăна танлашнă.

*– Хушма хуçалăхсене, фермер хуçалăхĕсене аталанма патшалăх сумлă пулăшу парать.*

– Акă «Агропромышленность комплексĕн аталанăвĕ» наци проекчĕпе килĕшӳллĕн хушма хуçалăха аталантарма 2006 – 2011 çулсенче 3234 çын çăмăллăхлă кредита тивĕçнĕ. Илнĕ укçапа усă курса вите-хуралтăсем çĕкленĕ, выльăх-чĕрлĕх, пĕчĕк калăпăшлă техника туяннă. Патшалăх «Фермер ĕçне пуçăнакан», «Çемье ферми» программăсене пурнăçа кĕртекенсене пулăшма палăртнине ырлатăп. Ял ĕçчĕнĕсем ял хуçалăх продукцине туса илме тата хавхаланĕç. Фермер ĕçне пуçăнакансем акă 1,1 миллион тенкĕ гранта тивĕçме пултараççĕ. Вăрнар районĕнчи пуçаруллă 8 çын кирлĕ документсене Чăваш Республикин ял хуçалăх министерствине кайса панă ĕнтĕ, конкурс пĕтĕмлетĕвĕсене кĕтеççĕ. «Çемье ферми» программăна пурнăçа кĕртекенсене кредитпа тивĕçтерессĕ, 60 процентне республика тата федераци бюджечĕсенчен субсидилеççĕ. Çемье ферми çĕклес енĕпе Пăртасри В.Антонов фермер тăрăшасшăн. Ӳркенменнисен ĕмĕчĕ пурнăçланатех.

*– Мĕн пур тытăмри хуçалăхсенче мехпарксене пуянлатассипе мĕнле тăрăшаççĕ?*

– Техника – ял хуçалăхĕн «чĕри». Мехпарка çĕнетсе пымасăр агропромышленность комплексне аталантараймастăн. Пĕлтĕр мĕн пур тытăмри хуçалăхсем 20 техника туяннă, çав шутран 11 трактор, тĕштырă выракан 6 комбайн, выльăх апачĕ хатĕрлекен 3 комбайн. Палăртмалла, килти хушма хуçалăх тытакансем те – А.Петров, А.Моисеев, А.Зайцев, А.Сергеев – хурçă «утсем» илнĕ.

**Е.ТИКИНЕВА**
**калаçнă.**

